26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
14
ЮНКУН
80(6317) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Уйрăм участоксене суйласа илсе акасси çинчен

Республикăри уй-хирсенче çурхи ĕçсем пуçланчĕç. Колхозсем халĕ клевер акас ĕçе массăллăн туса пыраççĕ, кĕрхи тырăсене апат параççĕ, акана тухма хатĕрленес тĕлĕшпе туса çитермен ĕçсене тăваççĕ, çурхи тĕштырă культурисене уйрăм участоксенче акма тытăнаççĕ. Редакцине пĕлтернĕ тăрăх, хăшпĕр районсенче çурхи культурăсене акма тытăннă ĕнтĕ. Вăрнар районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз апрелĕн 13-мĕшĕ тĕлне 8 гектар сĕлĕ, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 10 гектар сĕлĕ акнă. Чкаловски районри тăватă колхозра 12 гектар çуртырри, Елчĕк районĕнчи икĕ колхозра 6 гектар вика акнă. Ака ĕçĕсем Первомайски, Красноармейски тата ытти районсенче те пуçланнă. Çапла ĕнтĕ колхозсен хирĕсенче хĕрÿллĕ те ответлă ĕçсем пуçланчĕç.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçĕн хăйĕн законĕсем пур. Çав законсенчен пĕри вăл — тырпула агротехника енĕпе чи лайăх сроксенче, пысăк пахалăхпа акса хăварасси пулса тăрать. Тырпула лайăх вăхăтра акса хăвартăн пулсан, ака ĕçĕсене лайăх пахалăхпа туса, ирттертĕн пулсан, пысăк тухăçлă тырпул туса илме санăн пур шанчăксем те пур. Тата урăхла та. Тырпула кая юлса аксан, эсĕ лайăх тырпул туса илес шанчăка çухататăн.

Анчах колхоз хирĕсенчи участоксем пурте пĕр вăхăтра типсе çитмеççĕ. Çавăнпа та пĕтĕм уйхир çурхи шывран типсе çитессе кĕтсе тырпула акмасăр тăни сиенлĕ пулнă пулĕччĕ. Пулса çитнĕ кашни участока уйрăммăн суйласа илсе акса хăварас пулать. Çапла тума хушать агротехника. Унсăрăн хăшпĕр участоксем ытлашши типсе кайнă пирки тăпрари нÿрлĕх çухалма пултарать, вăл участоксенче вара тырпул начар ÿсет.

Иртнĕ çулхи опыт кăтартса панă тăрăх, хăшпĕр районсемпе колхозсем пĕлтĕр агротехникăн çак кăтартăвне çителĕклĕ пурнăçласа пыраймарĕç. Шупашкар районĕнчи колхозсем чылайĕшĕ тăпра пулса çитнĕ хыççăн пĕр-ик кун каярах юлса çеç çурхи тырăсене акма тытăнчĕç. Çавăнпа ака срокĕсене кăштах вăраха ячĕç. Çакăн пек йăнăша кăçал тепĕр хут тумалла мар.

Кунпа пĕрлех тепĕр майлă йăнăш тăвассинчен те сыхланас пулать. Пĕлтĕр Çĕмĕрле районĕнче, çурхи тырăсене кĕске вăхăтра акса хăварас тесе васканă пирки, агротехника кăтартăвĕсене пăсни те пулчĕ. Унти хăшпĕр колхозсем тырра алăпа сапаласа акрĕç те, ăна тивĕçлипе витсе хăвармарĕç. Çавна пула тырпул тухăçлăхĕ начартарах пулчĕ. Çакăн пек çитменлĕх те кăçал пулмалла мар.

Тырпула хăвăрт акма тăрăшмалла, анчах çав вăхăтрах ăна лайăх пахалăхпа, агрономи кăтартнă пек акса хăвармалла. Сухаланă чухне тарăн, шăйрăк хăвармасăр сухаламалла. Машинăпа, ретлĕн акма тăрăшмалла, тырă пĕрчисене лайăх витсе хăвармалла. Вăрлăх акмалли нормăна çирĕп пăхăнса пымалла. Ака ĕçне хăвăрт тата лайăх пахалăхпа туса ирттерес тесе, колхозсен мĕнпур вăйне мобилизацилесе, лайăх çанталăкăн кашни минутипе туллин усă курса ĕçлемелле. Май пур вăхăтсенче кунĕн-çĕрĕн ĕçлессине те организацилемелле.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ кăтартса панă тăрăх, колхозсенче тырпул акма тăпра пулса çитнине сăнамашкăн ятарласа уйăрнă колхозниксем пулмалла. Çак колхозниксемпе колхоз председателĕсен тата бригадирсен çак кунсенче уйхирсем тырă акма пулса çитнине тимлĕн сăнаса тăрас пулать, уйрăм участоксене суйласа илсе акма хатĕр пулас пулать.

Кăçал çуркунне ир килчĕ. Çакă вăл çуракине те иртерех туса ирттерме хушать. Çапла тăвас тесен, хатĕрленÿ ĕçĕсене паян-ыранах вĕçлемелле. Колхозсемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, ĕç дисциплинине çирĕплетмелле. Çак ĕçре ялти агитаторсен хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнмалла.

Пĕлтĕр пирĕн республика ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Пирĕн ĕçе партипе правительство тивĕçлипе хакларĕç. Анчах кăçал республикăри колхозсен татах та лайăхрах ĕçлемелле, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçакан Хĕрлĕ Çарпа тăвана çĕршыв валли çителĕклĕ тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 11-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци часĕсем нимĕçсен войскăсемпе груззем турттарса пыракан 30 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне сирпĕтнĕ, артиллерипе минометсен 4 батарейине пусарнă.

* * *

Волхов фрончĕн пĕр участокĕнче тăшман пысăк вăй пухса пирĕн позицисене атакăланă. Гитлеровецсен пирвайхи атакисене пирĕн чаçсем тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе сире-сире пăрахнă. Пиллĕкмĕш атака хыççăн, артиллерирен вăйлăн персе тăнипе, нимĕçсем пирĕн чаçсен боевой йĕркисем хушшине шăтарса кĕме пултарнă. Унтан пирĕн боецсем хирĕç пырса çапса тăшмана ывăтса янă та малтанхи позицийĕсене йышăнса илнĕ. Гитлеровецсен кун хыççăн тунă атакисене пурне те сире-сире пăрахнă. Туллимар данайсем тăрăх, çапăçу хирĕнче тата траншейăсенче, штык вĕççĕн çапăçнă çĕрте, 2.000 ытла нимĕç салтакĕпе офицерĕн виллине шута илнĕ. Темиçе вуншар гитлеровеца тыткăна илнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 оруди, 11 миномет, 46 пулемет, 9 радиостанци, винтовкăсем тата ытти çар хатĕрĕ нумай.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем тăшман атакисене сирсе пынă. Пĕр участокра нимĕç подразделенийĕ совет оборонин малти хĕрри патне пырса тухма пултарнă. Контратака туса пирĕн боецсем тăшмана ывăтса янă, 160 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăрса 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, миномет батарейине тата артиллерин 8 батарейине пусарнă.

* * *

Белгород районĕнче кĕçĕн лейтенант Пивоваров ертсе пыракан разведчиксен группи тăшман тăракан вырăна пырса кĕрсе, икĕ блиндажа сирпĕтсе янă тата 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Вĕлернисен хĕçпăшалĕпе документчĕсене илсе, пирĕн боецсем хăйсен чаçне таврăннă. Разведчиксен тепĕр группи нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пункта пырса кĕнĕ. Разведчиксем пĕр çурта нимĕç салтакĕсем пухăнни çинчен пĕлнĕ. Тăшман хуралне пĕр сас-чĕвĕ кăлармасăр катертсе, пирĕн боецсем çурта кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пынă çапăçура 19 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Унтан, темиçе çынна тыткăна илсе, пирĕн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре совет артиллерийĕ тăшманăн икĕ орудине пĕтерсе тăкнă, 6 дзотне аркатнă тата боеприпассен складне сирпĕтсе янă.

* * *

Украина партизанĕсен темиçе отрячĕ март уйăхĕнче тăшман тылĕнче чугунçул транспортне аркатас тĕлĕшпе ăнăçлă операцисем темиçе хут та туса ирттернĕ. Партизансем салтаксемпе çар техники тата боеприпассем турттарса пыракан 18 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 300 вагон, 20 автомашина пĕтерсе тăкнă, 8 чугунçул кĕперне сирпĕтсе янă. Кунсăр пуçне, тĕрлĕ çар хатĕрĕ хунă 10 склада аркатса тăкнă. Çав вăхăтрах партизансен отрячĕсем 3.000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 оруди, 28 пулемет, 1.000 ытла винтовка тата 200.000 яхăн патрон.

* * *

Аялараха нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Шлиссельбург хулинче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Шлиссельбург хулине пĕтĕмпех ишĕлтерсе тăкнă. Гитлеровецсем хулана тытса илнĕ чухне унта хуларан тухса кайма ĕлкĕреймен 5.000 çын ытла юлнă. 16 уйăх хушшинче çынсен хисепĕ 300-ре çити чакнă. Ыттисене концлагерьсене хупнă, ирĕксĕрлесе Германи каторгине илсе кайнă е пере-пере вĕлернĕ. Выçăпа чир-чĕрсенчен çĕршер çын пĕтнĕ. Предприятисен, учрежденисен, коммунальнăй отделăн тата уйрăм çынсен пулнă 953 çуртран 72 çурт кăна тăрса юлнă. Нимĕç оккупанчĕсем Петр Алексеев ячĕпе хисепленекен çитцă фабрикине, карапсем юсакан завода, хăма çуракан завода аркатса тăкнă, водопровода тата канализацие ишĕлтернĕ. Чи хаклă оборудование вĕсем Германие илсе кайнă. Хулари культура учрежденийĕсене пурне те аркатса тăкнă, икĕ больницăна, 2 поликлиникăна тата яслине çунтарса янă.

Эпир Совет халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене пурне те вырăссен Шлиссельбург хулине аркатса тăкнă нимĕç сволочĕсене пĕр шеллемесĕр таварма чĕнетпĕр». Акт çине çаксем алă пуснă: Павловцев, Губкин, Слащева, Мельникова, Войнич, Жукова, Чистоклов, Жуков, Морозова.

Апрелĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă тата разведка тунă. Старши лейтенант Шершнев ертсе пыракан разведчиксен группи çĕрле тăшман тăракан çĕре кĕрсе кайнă. Разведчиксем нимĕç блиндажĕсем патне шуса пырса, вĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Блиндажра пулнă гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра тăшмана хирĕç сайра-хутран артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Нимĕç пехотин отрячĕ пĕр участокра тĕттĕм çĕрпе усă курса пирĕн опорнăй пункт патне пырса кĕресшĕн пулнă. Пĕр чаçăн боецĕсем гитлеровецсене сывăха янă та вĕсене хирĕç пăшалпа пулеметсенчен пеме пуçланă. Çапăçу хирĕнче темиçе вуншар виле хăварса, тăшман каялла чакнă. Пĕр чаçăн артиллерисчĕсем, нимĕç позицийĕсем çине персе, артиллери батарейине, 2 миномета пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 7 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пĕр соединенин летчикĕсем 20 кун хушшинче нимĕçсен 70 полевой орудине çити тата зенитнăй артиллерин 12 орудине пусарнă е пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 12 складне сирпĕнтернĕ.

* * *

Ильмень кÿллинчен кăнтăртарахра старши лейтенант Олейник ертсе пыракан подразделенин артиллерисчĕсем 3 дзота аркатнă тата нимĕçсен темиçе орудине вĕсен расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн снайперĕсем пĕр кун хушшинче 32 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Кубань çинче пирĕн чаçсем разведка туса пынă тата тăшмана хирĕç артиллерирен персе тăнă. Юлашки кунсенче нимĕç авиацийĕ хастарланма пуçланă. Ĕнер пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ нимĕç комендатурине аркатса тăкнă. 18 гитлеровеца вĕлернĕ, 12 çынна тыткăна илнĕ. Партизансем 2 оруди пĕтерсе тăкнă, 6 пулемет, 27 винтовка тата тĕрлĕ документсем тытса илнĕ. Çав отрядри подрывниксен группи шоссе çулĕ çинчи 3 кĕпере сирпĕнтернĕ. Партизансен Щорс ячĕпе хисепленекен отрячĕ çур километр тăршшĕ чугунçула аркатнă тата нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă.

* * *

Аялараха нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вĕсен аллине тыткăна лекнĕ совет боецĕсене тискеррĕн асаплантарни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Калинин облаçĕнчи Поречье ялĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче блиндажра эпир нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ 3 красноармеец виллине тупрăмăр. Совет боецĕсене тыткăна илсен, гитлеровецсем вĕсене нумайччен асаплантарнă. Пĕр боецăнне нимĕç бандичĕсем аллисене касса татнă, тепринне хăлхисене каснă, виççĕмĕшĕнне пуçне çапса çурнă. Пур виллесене те пульăпа персе шăтарса пĕтернĕ». Акт çине çаксем алă пуснă: майор Графов, майор Кузьмин, старши сержант Мельник, старши лейтенант Чуриков, сержант Побережный, старшина Чубаров, красноармеец Бабков.

* * *

Югославн патриочĕсем хаяр çапăçусем пулнă хыççăн Итали оккупанчĕсене вăйлă тĕреклетнĕ позицисенчен сирпĕтсе кăларнă. Партизансем 200 винтовка, 25 пулемет, 6 миномет, 260.000 патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр районра Югослави партизанĕсем шыв урлă каçнă та тăшманпа ăнăçлăн кĕрешсе пыраççĕ.

Кенигсбергри çарпа хуçалăх объекчĕсене тапăнни

Кенигсберг—хĕвелтухăç Пруссин тĕп хули, çар промышленноçĕн пысăк центрĕ, паллă чугунçул узелĕ тата тинĕс порчĕ.

Тăшман хулине пирĕн летчиксем лайăх пĕлеççĕ. Иртнĕ çулта вĕсем хăйсен вилĕмлĕ грузне Кенигсбергри çарпа промышленность объекчĕсем çине пĕрре кăна мар пăрахнă.

Апрелĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле инçене вĕçекен авиаци летчикĕсем каллех Кенигсберг çине вĕçсе пынă. Ку тапăнура пĕлтĕр Берлин, Бухарест, Будапешт хулисем патне çул хывнă летчиксем çеç мар, аслă юлташсен боевой опытне туяннă талантлă çамрăксем те пулнă.

Инçене вĕçекен самолетсем тăракан аэродромсем çинче вăл кун питĕ хавас пулнă. Чи малтан Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Алексей Молодчий вĕçсе хăпарнă. Вăл йывăр тиенĕ машинăна çĕртен мастерла уйăрса пĕлĕтре курăнми пулнă. Ун хыççăн Совет Союзĕн Геройĕсем Краснухинпа Гаранин, летчик-орденоносецсем Марков, Евдокимов, Полежаев, Матвеев, Харитонов, Диденко т. ыт. те вĕçсе кайнă.

Пирĕн летчиксене япăх çанталăкра вĕçме тивнĕ. Çул çинче тачка пĕлĕтсем тĕл пулнă, вĕсенчен çÿле хăпарса пăрăнмалла пулнă. Çавăнпа та вĕçме кăтартакан çĕр çинчи паллăсем çухалнă. Штурмансем карапсене аэронавигаци приборĕсем тăрăх илсе пынă. Çакăнта ĕнтĕ вĕсен мастерлăхĕ, пĕлсе тăни тата авиаци культури палăрнă.

Палăртнă сехетре пирĕн самолетсем Кенигсберг çине вĕçсе çитнĕ.

Гварди старши лейтенанчĕ штурман Сухарев бомбăсем пăрахать. Хăй пăрахиччененех хулара вут вăйлăн хыпса илнисене тата взрывсем пулнине курать. Паллă тунă объект çинче вăл хăйĕн бомбисене вăркăнтарать. Тата темиçе çĕрте вут хыпса илет. Сухарев хыççăн майор Гизело, старши лейтенант Феоктистов, лейтенант Старков, гварди майорĕ Алейников т. ыт. те бомбăсем пăрахаççĕ.

Тепĕр аэродромран сывлăша гварди экипажĕсем хăпарнă, вĕсене çав кун кăна гварди ялавне панă пулнă. Вĕсем хушшинче гварди майорĕн Радчук юлташăн экипажĕ, нумай пулмасть 200-мĕш хут вĕçсе тухнине паллă тунăскер, уйрăмăнах палăрнă. Вăл бомбăсене питĕ тĕл пăрахнă. Заданисене Совет Союзĕн Геройĕсен гварди капитанĕ Курятникăн, гварди майорĕн Глазковăн, орденоносец Вихоревăн тата ыттисен экипажĕсем те кăтартуллăн пурнăçланă.

Кенигсбергăн çарпа хуçалăх объекчĕсене пысăк сиен кÿнĕ.

Капитан И. БЕРДНИКОВ.
Апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС).

ФРОНТРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

ПАЛАКИ ИНКЕН КИВ КĔРĔКĔ

Нимĕçсем тытса илнĕ ялăн хĕрринче, чĕркуççи таран юр çинче, Италипе Румыни салтакĕсем хуралта чĕтресе тăраççĕ. Йывăç тĕмисем хушшинче пĕр кив кĕрĕк выртнине курсан, вĕсем иккĕшĕ те пĕр харăс унталла чупма тытăнаççĕ.

— Итле-ха, — тет Румыни салтакĕ,—слюшай-ка. Ку хĕрарăм кĕрĕкне эсĕ мана пар, эпĕ ун вырăнне сана Украинăн хама тивекен пайне парăп, — тет. — Эпĕ кĕрĕкĕн фасонне ÿкерсе илесшĕн, — тет.

— Ухмахсем кунчухне вилсе пĕтнĕ, — тет Итали салтакĕ, сивĕ çил çинче путек хÿри пек чĕтресе. — Луччă эп сана ун вырăнне Кавказăн хама тивекен пайне парăп (мĕншĕн тесен Украинине те, ыттисене те пурпĕрех пиртен каялла туртса илессĕ-ха та,—тет вăл хăй ăшĕнче).

Çулпа иртсе пыракан нимĕç салтакĕ кĕрĕке çавăрса илет те хăйĕн ырхан хул-çурăмне пĕркенме тытăнать.

— Аван, аван, — тет çав вăхăтра йывăç тĕми айĕнче пăхса тăракан партизан, умлă-хыçлă нимĕçе, итальянеца тата румына персе ÿкерсе. — Пăлаки инкен йытти айĕнче выртакан кив кĕрĕке илсе килсе миçе тăшмана тирпейлемерĕм ĕнтĕ...

(«Сталинский воин»).

Çуракине хăвăрт та пысăк пахалăхпа туса иртерер!

Çураки ĕçне колхоз хĕрÿллĕн тытăнчĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсенче çураки пуçланчĕ. Именкассинчи «Красное Именево» колхоз çураки ĕçне хĕрÿллĕн туса пыма тытăнчĕ. Апрелĕн 12-мĕшĕнче колхоз 5 гектар, апрелĕн 13-мĕшĕнче 20 гектар сĕлĕ акрĕ.

Колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе организованно тухрĕ. Колхозра столовăй ĕçлет, колхозниксем пĕрлешсе апатланаççĕ. Бригадăсем пĕр-пĕрипе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Малта пыракан бригадăна пама колхозра куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тунă, ăмăрту результачĕсене çырса пыма кăтарту хăми туса çакнă.

Ака ĕçĕнче машинăсемпе туллин усă кураççĕ. Колхозри икĕ сеялка пĕрмаях ĕçлеççĕ.

Бригадăсенче колхозри комсомолецсем пример кăтартса пыраççĕ. Комсомолец Илюдин Петр пĕр кун хушшинче 1,25 гектар сухаларĕ, унпа ăмăртакан В. Павлов комсомолец 1,05 гектар сухаларĕ.

Колхоз ĕçе ирхине 5 сехетре тытăнать те сĕм тĕттĕмченех ĕçлет.

П. ВАСИЛЬКОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Çураки пуçланчĕ

ВĂРНАР, апрелĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Маларах пулса çитнĕ çĕр участокĕсене суйласа илсе, паян Хурăнсурти Чапаев, Янгорчинори Ленин, Зеленовкăри Ленин, Крупская, Ворошилов ячĕсемпе хисепленекен колхозсем çуракине тухрĕç. Крупская ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 10 гектар сĕлĕ акрĕç.

С. Коротков,
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

Суха тăваççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче çурхи ĕçсем пуçланчĕç. Колхозсем ĕнер тата паян çурхи тырăсене акмашкăн суха тума тытăнчĕç. «Путь Ленина» колхоз 15 гектар, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар, «Çăлтăр» колхоз 6 гектар, «Красное знамя» колхоз 4 гектар тата «Красное Батырево колхоз 12 гектар сухаларĕç.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче районри ытти колхозсем те суха тумашкăн тухма шутлаççĕ.

4 гектар сĕлĕ акнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Алманчри «12 лет Октября» колхоз çураки ĕçĕсен пахалăхне тĕрĕслесе тăма пахалăх комисси тунă. Çак комиссин членĕсемех çĕр епле типсе пынине те сăнаса тăраççĕ. Çурхи тырăсем акмалли пусса тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, комисси 4 гектар çĕр лаптăкĕ çинче халех сĕлĕ акма май пуррине палăртрĕ. Апрелĕн 12-мĕшĕнче çав участокри 4 гектар çине колхоз сĕлĕ акрĕ. Ыран, апрелĕн 14-мĕшĕнче, колхозăн пур бригадисем те кĕрхи çĕртме тунă пусса сÿрелеме тытăнаççĕ. Тепрер кунран колхоз уйрăм вырăнсене сухалама тухать.

С. Шадин.

Ыраш тата тулă калчисене апат параççĕ

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Чылай колхозсем шăнтнă çĕр тăрăх ирхине кĕрхи тырăсен калчисене апат параççĕ. Хĕлле пухса хатĕрленĕ вырăнти удобренисем халь питех те кирлĕ пулчĕç ĕнтĕ. Вĕсемпе калчасене апатлантарни кĕртыррисен тухăçлăхне нумай ÿстерет.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене фекалипе кĕл, çĕрнĕ тислĕкпе кĕл хутăштарса апатлантарать. Паянхи куна вĕсем пурĕ 50 гектар çинчи тырра апат панă.

Çавăн пекех ытти колхозсенче те хĕлле пухса хатĕрленĕ кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, кĕлпе тата ытти удобренисемпе халь туллин усă кураççĕ. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне çăнăх туса тата ăна кĕлпе хутăштарса, «Активист» колхоз 15 гектар, «Красный партизан» колхоз 22 гектар тырра апатлантарчĕç.

В. Веселов.

Патриотизмлă пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем уйхир ĕçĕсене пысăк çĕкленÿпе туса пыраççĕ: клевер акаççĕ, кĕрхи тырăсем çине удобренисем кăлараççĕ, çурхи тырăсем акма хатĕрленессине вĕçлесе пыраççĕ.

Апрелĕн 11-мĕшĕ тĕлне район 486 гектар клевер акрĕ, 432 гектар кĕрхи тырă çине вырăнти тата минераллă удобренисем кăларчĕ. Чылай колхозсем уйхирти ĕçе организованно тухрĕç. 17 колхоз клевер акмалли плана икĕ талăк хушшинче пурнăçларĕç.

«Октябрь» колхозра иртнĕ çул кĕрхи тырăсен тухăçлăхĕ пысăк пулман. Çакна шута илсе кăçал колхозниксем кĕрхи тырăсене лайăх пăхса илме тăрăшаççĕ. Паянхи куна колхоз 85 гектар çинчи кĕрхи тулă калчисемпе ыраш калчисене минераллă тата вырăнти удобренисемпе çемçетрĕ. Калчасем çине хура тăпра тата выльăх-чĕрлĕх фермисен килкартийĕнчи нумай çул хушши тислĕк айĕнче шÿсе выртнă тăпрана та кăларчĕç. Удобрени парас ĕçе колхозниксем тĕплĕн, калчасем юр айĕнчен епле тухнине шута илсе турĕç. Юр айĕнчен вăйсăртарах тухнă кĕрхи тулă калчисем çине чи малтан удобрени кăларчĕç.

Ф. Новиков.

Воронеж хулине юсаççĕ

Иртен пуçласа тĕттĕмченех Воронеж хули çыннисем хулана юсас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Нумай урамсемпе бульварсене тасатнă, çĕршер çуртсене юсаççĕ. Автобуссем çÿреме пуçларĕ. Вицĕ мунча, çăкăр заводне, çичĕ пекарни юсанă, 40 ытла магазин, 30 столовăй уçнă, промкооперацин çирĕм артелĕ ĕçлеме пуçланă. Шкулсем, ача сачĕсем, яслисем ĕçлеме тытăннă.

Воронежа юсама ытти хуласем пулăшаççĕ. Куйбышевран 18 вагон стройматериалсем янă, Липецкран эшелон хăма, строительство инструменчĕсем, савăт-сапа янă. (ТАСС).

Нимĕç авиацийĕ Курска тапăнни

Апралĕн 11-мĕшĕнче нимĕç авиацийĕ Курск хулине тапăннă. Тăшман самолечĕсен пысăк пайне пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллери хула çывăхĕнче сапаласа янă. Хула çине тăшманăн темиçе самолечĕ пырса çитсе бомбăсем йĕркесĕррĕн пăрахнă. Вĕсем материальнăй сиен кÿнĕ, вилнисем те пур.

Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 9 самолетне ÿкернĕ. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ, вĕсен летчикĕсем парашютпа сиксе çăлăннă.

Нимĕç авиацийĕ Краснодара тапăннă

Апрелĕн 12-мĕшĕнче нимĕç авиацийĕ Краснодар хулине тапăннă. Хула çывăхĕнче вĕсене пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллери вăйлăн персе хирĕç тăнă. Хула çине вĕçсе кĕнĕ самолетсем пурăнакан çуртсем çине йĕркесĕррĕн бомбăсем пăрахнă, вĕсене сиен кÿнĕ. Çар объекчĕсене сиен туман. Пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллери Краснодар районĕнче тăшманăн 25 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура çĕнтерне предприятисене палăртнă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Буини юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводрах хăварма йышăннă.

Май уявне çултайăкри плана 250 процент тултарнипе кĕтсе илессишĕн

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн пирĕн чылай рабочисем уйăхри плана 200—300 процент тултарса пыма тытăнчĕç. Вĕсен шутĕнче В. Архипова, Ф. Сергеева, З. Павлова, А. Андреева, А. Викторова, М. Тимофеева т. ыт. те пур.

Стахановла ĕçлени пула артель 1943 çулхи плана 1-мĕш кварталта тултарчĕ. Тарпромсоюз пире кăçал 103.200 тенкĕлĕх тĕрлĕ таварсем туса кăларма план панă. Артель коллективĕ пĕрремĕш кварталта 215.259 тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Çултайăкри плана 208 процент тултарчĕ. Лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн Тарпромсоюз январь уйăхĕнче пирĕн артеле хăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕ. Çакăнпа пĕрлех Чăваш АССР Совнаркомĕ артелĕн рабочисене палăртнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ пачĕ. Кун хыççăн артельри работниксен ĕçлес хастарлăхĕ калама çук ӳсрĕ.

Варçă вăхăтĕнче колхозсене колхозниксем валли куллен кирлĕ таварсем чылай туса кăлартăмăр. Сукар рабочи—рационализатор Иван Николаев хăмăтсем тăвас ĕçре пуçарулăх кăтартрĕ. Унăн ĕçне Чăваш АССР Совнаркомĕ ырларĕ. Тарпромсоюз президиумĕ Николаев юлташа 300 тенкĕ преми пачĕ.

Çапла вăра райсоюза эпир пĕрремĕш кварталта 263.500 тенкĕлĕх тавар сутрăмăр. Вĕсен шутĕнче 14 тонна вĕрен тата тилхепе, 2.000 ашăк, 17.700 мăшăр турта пăявĕ, 1.500 хăмăт пĕвенĕ, 8.000 чĕлĕр урхалăх т. ыт. те.

Артелĕн столовăй пур. Çакă вăл рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшрĕ. Ĕç тухăçлăхне ӳстерме лайăх мел пулса тăчĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн тупнă çитĕнӳсене çирĕплетсе, эпир Май уявне çултайăкри плана 250 процент тултарнипе кĕтсе илессишĕн, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешетпĕр.

Г. Ерисов.
Красноармейски районри «Стрела» артель.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Финанс работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулти пĕрремĕш кварталти итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулти пĕрремĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи финанс пайĕ (заведующийĕ Анкудинов, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин) ăмăртура мала тухнă тесе йышăннă, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне унăн аллинчех хăварнă тата уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 7.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Красноармейски районри финанс пайĕ (заведующийĕ Скворцов, райсовет исполкомĕн председателĕ Александров) **иккĕмĕш вырăн йышăннă**, ăна ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ панă.

Шупашкар районĕнчи финанс пайĕ (заведующийĕ Алексеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов) **виççĕмĕш вырăн йышăннă**, ăна ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 3.000 тенкĕ панă.

1943 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче доходсем тăрăх плана тултарас тĕлĕшпе Шăхасан, Вăрмар, Çĕрпӳ, Советски, Улатăр, Куславкка, Етĕрне тата Комсомольски районсенчи финанс пайĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче ĕççыннисене кино кăтартасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ çуркуннехи уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче халăха кино кăтартма хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен Кинофикаци управленийĕн докладне итлесе сӳтсе-явнă.

Совнарком кино кăтартас ĕç, уйрăмах ялсенче, япăх пулса пынине палăртнă. Кинофикаци управленийĕ кино кăтартас тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсене çирĕплетсе хăварман тата кино аппарачĕсене запаслă пайсемпе горючи парса тăрайман пирки, халĕ республикăра чылай киноустановкăсем ĕçлемеççĕ. Вăрнар, Йĕпреç, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри тата Елчĕк районĕсенче кино пачах кăтартмаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Кинофикаци управленине халăха кино кăтартас ĕçе тĕпрен лайăхлатма хушрĕ. Ĕçлемесĕр тăракан кино аппарачĕсене юсаса ĕçе ямалла. Çавăн пекех ялсенче кино кăтартас ĕçе вăйлатма апрелĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хуласенчи кинотеатрсемпе районсенчи клубсенчен киномеханиксен пĕр пайне ямалла. Апрелĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр урăх ĕçсенче ĕçлекен киномеханиксене тупса палăртмалла.

Совнарком Кинофикаци управленийĕн районсенчи отделĕсен начальникĕсене районсене ертсе пыракан организацисемпе пĕрле апрелĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр çурхи ĕçсем вăхăтĕнче кино кăтартмалли маршрутсем туса çирĕплетме, çав вăхăтри уйăхра икĕ хутран кая мар кино кăтартмаллине шута илме хушрĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

13. Мускавшăн!

Фашистсем малалла
каяймарĕç пĕр утăм.
Этем пулчĕ кунта
хурçăран çирĕпрех.
Эсĕ, аслă çĕршыв,
ывăлусене куртăн,
Вĕсем пулчĕç кунта
улăпсемпе пĕрех.

Юлашки сывлăшчен
Диев тăчĕ: — Тĕпретĕр!
Вĕсем ӳкрĕç,
сутмарĕç Росси çĕрне.
Анчах ирсĕр шакал —
çурма аслă ефрейтор
Хăвалăнă çаплах
хăйĕн пыйтлă çарне.

Çаплах илĕртнĕ вăл:
— Мускавра пулĕ канăç,
Пулĕ чаплă уяв,
ĕçкĕ-çикĕ, парад.
Çук, суятăн, эсрел!
Мускава сана памĕç!
Мавзолей çинче Сталин
боец пек тăрать.

Кунта пирĕн парад.
Хĕрлĕ Çарăн парачĕ.
Тимĕр юхăм шăвать
фронталла, малалла
Вĕç-хĕррисĕр полксем
хурçă ретĕн пыраççĕ,
Аслă Сталин çулпуç
вĕсене саламлать.

— Çул кăтарттăр сире
Аслă Ленин хăвачĕ!
Вăйхал кӳрччĕр сире
аслă асаттесем! —
Сталин чĕнчĕ пире,
çĕнтерме приказ пачĕ:
— Чап та чыслăх сире,
тăшмана çĕнтерсен.

Акă тухрĕç вара
Тăван çĕршĕн, Мускавшăн
Çĕршыври халăхсен
паттăр ывăлĕсем:
Вырăспа юнашар
белорусĕ, чăвашĕ —
Пурте, пурте пĕрле
вăрçа тухрĕç вĕсем.

Танксен хурçă полкне
васкатать Винокуров
Тăван çĕршĕн, Мускавшăн
малтан малалла.
Тӳпере — истребитель.
Васильев сатуррăн
Çăхансен ушкăнне
хăвалать.

Сывлăшран та çĕртен
çунтараççĕ хĕрӳллĕн,
Пĕр самант та кунта
канăç çук тăшмана.
Пирĕн паттăр гвардеец
тутар Габайдулин
Миномет, вучĕпе
фрицсене ăшалать.

Вăрçăн аслă турри —
ывăнми артиллери
Сăптăрать нимĕçе,
çĕр, алтсах пытарать.
Ку вăл Лаптев ĕçлет.
— Хытăраххăн ĕçлер-и! —
Тенĕ сасă çĕклет
хал пĕтен паттăра.

Çап, хăюллă чăваш,
Пухтел ывăлĕ Лаптев!
Винокуров, кăтарт,
Шупашкар хăватне!
Çап, Васильев, çунтар,
чăваш пек пурте çапчăр!
Габайдулин, çӳлте
тыт тутарăн ятне!

Тинĕсрен—тинĕсе
кĕрлет çулăмлă вăрçă,
Хуть ăçта та пĕрех,
Эс тăван пĕр ĕçе.
Мускава хӳтĕлен,
юн тăкан тăван çĕршĕн,
Тăван çĕршĕн шаккан
нимĕçе.

Хура тинĕс çинче
Элĕк ывăлĕ Ефимов
Штурмовикпе çӳрет
чăн аçа-çиçĕмле.
Тăшмана кун памасть
Ун хăватлă вут-хĕмĕ;
Вăл çапла çĕршыва,
Мускава хӳтĕлет.

Чăваш ывăлĕсем!
Чăваш çĕрĕ ӳстернĕ
Геройсем-улăпсем,
вăрçăр паттăрăнрах!
Ав танксем, составсем,
вĕç-хĕррисĕр цистерна
Орлов вучĕпеле
арканса пăтранать.

Юлашки сывлăшчен
тăван çĕршĕн, Мускавшăн
Тăшманпа çапăçас
халăх ывăлĕсем.
Вырăспа юнашар
белорусĕ, чăвашĕ —
Пурте, пурте пĕрле
вăрçа тухнă вĕсем.

Совет çĕрĕ çинче
аслă халăх çĕкленнĕ,
Юмахри улăп пек
иксĕлми паттăр Ту.
Çапла пулчĕ,
Мускав патĕнчи наступлени,
Ку пуçланчĕ хаяр
аркату.

(Малалли пулать.)

(Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетлĕнме пуçланă.)

СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин юлташа Мексика посланникĕ Кинтанийа господин хăйĕн верительнăй грамотисене панă

Апрелĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен 2 сехетре Кремльте Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Мексикăн СССР-ти Чрезвычайнăй посланникне тата полномочнăй министрне Л. Кинтанийа господина йышăннă. Кинтанийа господин хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, НКИД-ăн Протокол пайĕн пуçлăхĕ Ф. Ф. Молочков юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем илнĕ чухне М. И. Калинин юлташ Л. Кинтанийа господинпа калаçнă.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер авиаци Итали карапĕсене тапăннă вăхăтра «Триест» ятлă 10.000 тонна водоизмещениллĕ йывăр крейсера путарнă. Тепĕр крейсера хытă сиенленĕ.

Америкăри радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Суса тата Кайруана йышăннă. Фронтăн ытти участокĕсенче те союзниксем малалла куçса пынă.

Юлашки икĕ кун хушшинче Тунисра тăшманăн 79 транспортнăй самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн транспортнăй авиацийĕ вăйлăн ĕçлени Туниспа Итали хушшинчи тинĕс çулне нимĕçсем шанчăксăр тесе шутланинчен килет.

Юлашки икĕ эрне хушшинче союзниксем тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

ГЕНЕРАЛ МОНТГОМЕРИ 8-МĔШ АРМИН ЧАÇĔСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 8-мĕшĕнче Англин 8-мĕш армин чаçĕсенче çав армин командующийĕ генерал Монтгомери чĕнсе каланине вуласа панă. Унта çапла каланă: нимĕçсене Тунис çыранĕнче «чăн-чăн «Дюнкерк» кĕтет. (Дюнкерк—Па-де-Калэ çинчи Франци порчĕ. 1940 çулта нимĕçсем тинĕс хĕрне хĕстерсе çитерсен англичансен экспедициллĕ армийĕ çав портран ĕнтĕ Англие тухса кайнă). Марет линийĕ патĕнче çапăçу пуçлиничченех вăл войскăсем умне виçĕ задача лартни çинчен асăрхаттарнă:

Пĕрремĕшĕ, Марет позицийĕсем патĕнче тăшмана аркатса тăкасси; çакна ĕнтĕ мартăн 21-мĕшĕпе 28-мĕшĕ хушшинче пурнăçланă, унта 8.000 çынна тыткăна илнĕ;

Иккĕмĕшĕ, Габес коридорĕнче иртсе каясси; ку задачăна апрелĕн 6-мĕшĕнче пурнăçланă; 7.000 çынна тыткăна илнĕ;

Виççĕмĕшĕ, Сфакспа Сус патне ситесси тата, юлашкинчен, Тунис патне çитесси; ку задачăна халĕ пурнăçласа пыратпăр.

Чĕнсе каланинче малалла çакна паллă тунă: 8-мĕш арми малалла та çавăн чухлех тыткăна илсе пырас пулсан, тăшманăн хăйĕн позицийĕсене тытса тăма пехота та юлмĕ, тенĕ. Юлашкинчен, чĕнсе каланинче «Тăшмана тинĕсе ывăтса яма Тунис патне малалла!», тенĕ.

ХАКСЕМПЕ ĔÇУКÇИНЕ КОНТРОЛЬЛЕС ПИРКИ РУЗВЕЛЬТ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Хаксемпе ĕçукçине малалла ӳсме чарас шутпа Рузвельт приказ кăларнă. Пичет представителĕсемпе калаçнă чухне Рузвельт çапла каланă: конгресри фермерсен блокĕ, ялхуçалăх продукчĕсен хакне ӳстерме ыйтнине пурнăçлас вырăнне эпĕ фермерсене правительстворан субсиди пама каларăм. Çавăн пирки ĕнтĕ нумаях пулмасть ялхуçалăх продукчĕсен хакне хăпартма палăртнă законопроекта чарнă.

Рузвельт çакна та паллă тунă: çав приказ тăрăх, ĕçукçине тата окладсене правительство йышăннă 15 процентлă нормăран ӳстерсе тӳлессине те чармалла, пит юлса пыракан ĕçукçине кăна хăпартма юрать. Приказра çакна та палăртнă: ĕç ыйтăвĕсене йĕркелекен управление рабочисене юлашки вырăнта илнĕ ĕçукçинчен ытларах тӳлесе ĕçе илме чармашкăн право панă.

Юлашкинчен Рузвельт инфляцие чарасси çинчен каланă. Çав задачăна пурнăçлама, — тенĕ Рузвельт,— пысăкрах налогсем хумалла пулать.

КĔСКЕН

* Шарлеуа çĕр кăмрăк районĕнче (Бельгия) патриотсен ушкăнĕ пĕр вăхăтрах электричествăн 15 подстанцине сирпĕтсе янă. Çав районтах, Пьетон деповĕнче 7 паровоза пĕтерсе тăкнă.

* Мартăн 21-мĕшĕнче, вырсарни кун, Бельгири пур чиркӳсенче те Бельгири католиксен чиркӳ пуçлăхĕн посланине вуласа панă. Вăл посланире бельгиецсене вăйпа Германие ĕçлеме илсе кайнине хирĕç протестленĕ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 78-мĕш номерĕнче пичетленнĕ «Чăваш АССР Совнаркомĕнче» тенĕ статьяра 5-мĕшпе 6-мĕш татăка (абзаца) çапла вуламалла:

«Çĕрпӳ районĕнчи Упакассинчи артеле (правлени председателĕ Тимофеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров)—3.000 тенкĕ;

Шупашкар хулинчи «Вышивка» артеле (правлени председателĕ Егорова, хула совет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Плетнева)—4.000 тенкĕ».

Фронтовиксен çемьисемшĕн яланах тăрăшмалла

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хамăрăн Хĕрлĕ Çара май килнĕ таран ытларах пулăшас тесе, пирĕн республикăри ĕççыннисем, мĕнпур совет халăхĕ пекех, пĕтĕм вăйĕсене хураççĕ. Халăхăн çав пулăшăвĕ тĕрлĕ ĕçсенче: фабрикăсемпе заводсенче производствăллă заданисене вăхăтра тултарнинче тата ирттерсе тултарнинче, ялхуçалăх çимĕçĕсем туса кăларассине ӳстерннинче, Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем пухнинче, фронта яма парнесем организациленинче, танксемпе самолетсем тума укçа-тенкĕ пухнинче тата ытти тĕрлĕ ĕçсенче палăрса тăрать.

Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçсенчен пĕри вăл — фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни пулса тăрать. Совет правительстви, коммунистсен партийĕ фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшассине государствăн питех те кирлĕ задачи вырăнне хураççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ВКП(б) Центральный Комитечĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле панă лозунгсенче — çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшни эпир пĕтĕм Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин çур ĕçĕ пулса тăрать тесе каланă.

ВКП(б) Обком бюровĕн решенийĕ тăрăх, март уйăхĕн иккĕмĕш çуррине пирĕн республикăра çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх пулса иртрĕ. Çав вунăкунлăх чăннипех те паха результатсем пачĕ. Вунăкунлăх вăхăтĕнче çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшассине вăйлатас тĕлĕшпе халăх хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, çав вăйтупа предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче пухусемпе канашлусем 1.800 яхăн туса ирттернĕ. Çав ĕçе районри тата ялти партипе комсомол, советсемпе профсоюз активне 6,5 пин çынна явăçтарнă. Республикăри мĕнпур çар çынни çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕслесе тухнă, вĕсен нушисене тивĕçтерме çĕнĕрен майсем тупнă, пĕтĕмпе 30.476 çемьене тĕрлĕ пулăшу панă.

Вунăкунлăх хушшинче çар çыннисен çемьисене 34.500 пăт апат-çимĕç —тырпул, пахча-çимĕçсем, çĕрулми тата ыт. тĕрлĕ продуктсем панă, вăл шутра 269 килограмм услам çу, 1.990 килограмм аш-какай пур. 33.054 кубометр вутă турттарнă. 184.000 тенкĕлĕх укçан пĕр вăхăтлăх пулăшу панă.

Çар çыннисен çемьисене 4.515 пуç тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх панă, вăл шутра 282 пăру, 3.000 ытла сысна çури т. ыт. те. Пысăк çемьеллисене —21 хуçалăха пĕрер пуç сăвакан ĕне панă. Уйрăмах нушаллисене тумтирсемпе атă-пушмаксем парса пулăшнă. Вунăкунлăх вăхăтĕнче, халăх хушшинче пухса тата мастерскойсенче туса хатĕрлесе, 3.552 мăшăр тĕрлĕ атă-пушмак, çиелтен тата аялтан тăхăнмалли çипуçсем 8.022 комплект панă. 367 хваттере юсанă, çĕнĕрен 180 хваттер тупса панă. Мастерскойсенче 2.673 мăшăр атă-пушмаксем тата çири тумтирсем юсаса панă. Суту-илӳ организацийĕсем çар çыннисен çемьисене 14.680 метр ытла мануфактура, 2.118 комплекта çити тумтирсем, 3.918 мăшăр чăлха тата ытти тĕрлĕ япаласем сутнă.

Кусемсĕр пуçне вунăкунлăх вăхăтĕнче районсенче продовольстви резервлă фондне тунă. Çавна валли тĕштырă, çăнăх, кĕрпе тата ытти çимĕçсем пĕтĕмпе 55.974 пăт пухнă, вăл шутра 1,5 тонна ытла усламçу, 642 килограмм пыл. Укçан вара 450 пин тенкĕ пухнă. Вунăкунлăх вăхăтĕнче çар çыннисен çемьисенчен 1.808 çынна ĕçе вырнаçтарнă.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе организациленĕ вунăкунлăх пуринчен ытларах Шупашкар, Улатăр тата Канаш хулисенче, Шупашкар, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче йĕркеллĕн иртрĕ.

Шупашкарта фронтовиксен çемьисене пулăшма халăх хушшинче 133.850 тенкĕ укçан, çипуç-тумтирсем пĕтĕмпе 1.911 япала, атă-пушмаксем 728 мăшăр, мануфактура 3.100 метр, чăлхасем 2.535 мăшăр, тĕрлĕ савăт-сапа 1.183 штука, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем 32 тоннăна яхăн, çу 250 килограмм тата килте кирлĕ ытти тĕрлĕ çимĕçсемпе япаласем нумай пухнă. 98 хваттере юсанă, çĕнĕрен 77 хваттер тупса панă. Хулари суту-илӳ организацийĕсем, вырăнти тата кооперативлă промышленноçăн предприятийĕсем çар çыннисен çемьисем валли çипуç-тумтир 3.040 штука, атă-пушмаксем 683 мăшăр тата ытти тĕрлĕ промтаварсем чылай уйăрса панă.

Çавăн пекех Канашпа Улатăр хулисенче те пысăк ĕçсем тунă. Шупашкарпа Канаш хулисенчи предприятисемпе мастерскойсен уйрăм коллективĕсем çар çыннисен çемьисене пулăшас тесе, ĕçлеме тивĕçлинчен ирттерсе темиçе сехетшер тата кунăшар ĕçленĕ, воскресниксем туса ирттернĕ тата ытти те.

Шупашкар районĕнче çар çыннисен çемьисене 4 ĕне, 15 пăру, 12 качака, 10 путек, 484 сысна çури панă. Продовольстви резервлă фондне тума колхозсенче тата колхозниксем хушшинче тĕштырăпа çăнăх 263 центнер, çĕрулми 304 центнер, пахча-çимĕçсем 19 центнер, çу 45 килограмм пухнă т. ыт. те. Çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе çак районра уйрăмах Заводской ялсоветĕнче лайăх йĕркеленĕ. Ку ялсовечĕ танксемпе самолетсем тума укçа-тенкĕ пухас ĕçре те уйрăмах палăрчĕ.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче Шупашкар районĕнче çар çыннисен 349 çемьи валли (эвакуаци йĕркипе куçса килнисем валли) пахча вырăнĕсем панă тата вĕсене вăрлăхсем парса пулăшнă.

Нумай ялсовечĕсемпе колхоз правленийĕсем çар çыннисен çемьисемшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Елчĕк районĕнчи «Ново-Чурино» колхоз председателĕ Ларионов юлташ фронтовиксен çемьисемшĕн мĕнле тăрăшмаллин тĕслĕхне кăтартса парать. Ку колхозра çар çыннисен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнисен çемьисене пурне те вак-тĕвек выльăх-чĕрлĕхсем, вутă тата апат-çимĕçсем парса пулăшнă. Çар çыннин арăмĕ, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ А. Г. Маслова юлташ колхозра активлăн та тӳрĕ кăмăллăн ĕçленипе колхозниксем умĕнче хисепе тухнă, хальхи вăхăтра вăл завхоз пулса ĕçлет. Унăн лайăх ĕçне шута илсе, колхоз ăна мĕн кирлине пурне те туса панă. Унăн — качака, 4 хур, 15 чăх пур, хĕлле вăл иртнĕ çулта колхоз панă 5 пăт туртакан сыснана пуснă, вунăкунлăх вăхăтĕнче вара колхоз ăна татах пĕр сысна çури панă. Колхоз правленийĕ нумаях пулмасть Маслова мăшăрĕнчен — фронтовикран çыру илнĕ. Çав çырура вăл хăйĕн çемьишĕн тăрăшнишĕн тав тăвать.

«Фашизм пур-пĕрех пĕтет, — тесе çырать вăл хăйĕн çырăвĕнче, — эпир нимĕç пусмăрçисене пĕтерсе тăкас кун, хамăрăн çĕре вĕсенчен тасатса киле таврăнас кун инçех мар ĕнтĕ. Унчухне вара эпĕ сире, тылри работниксене, колхоз председателĕпе колхозниксене, пирĕн çемьесемшĕн совет çыннисем пек тимлĕн тăрăшнишĕн аллăрсене чăмăртаса хам тав тăвăп...»

Каламасăрах паллă, фронтовиксен çемьисемшĕн çакăн пек тимлĕн тăрăшни Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу пани пулать, мĕншĕн тесен çакă вăл кашни фронтовикăн çапăçури вăйхăвачĕпе пултарулăхне ӳстерет.

Анчах та хăшпĕр районсенче, сăмахран, Красноармейски, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Шăхасан, Канаш тата ытти уйрăм районсенче вунăкунлăх тивĕçлĕ пек йĕркеллĕн иртмерĕ. Çав районсенчи партипе совет организацийĕсем вунăкунлăхра фронтовиксен çемьисен нушисемпе ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре татăклă улшăну тума тăрăшмарĕç.

Хăшпĕр çĕрте вырăнти совет органĕсем çар çынни çемьисен нушисем çине бюрократла чунсăррăн пăхни çинчен калакан уйрăм фактсем те пур. Хăшпĕр ялсовечĕсен айăпĕпе çар çыннисен çемьисем хăйсене закон тăрăх тивекен пособисемпе льготăсене нумай уйăхсем хушши илеймеççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхаш ялĕнчи Швецов гражданина Хĕрлĕ Çар ретне 1941 çулăн вĕçĕнче илнĕ, унăн çемьи вара хăйне закон тăрăх тивекен пособие юлашки вăхăтчен илеймесĕр тăнă. Çав Çĕмĕрле районĕнчех райсобес айăпĕпе çар çыннисен чылай çемьисем пособисем илеймеççĕ. Çав вăхăтрах 20.000 тенкĕ ытла законсăр валеççе пĕтернĕ, урăхла каласан, пособисем илме тивĕçлĕ мар çемьесене пособисем панă.

Районсенчи партипе совет организацийĕсен, çавăн пекех судпа следстви органĕсен, уйрăмах тата çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлеме райисполкомсем çумĕнче çĕнĕрен тунă отделсен çавăн пек фактсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымалла. Фронтовиксен çемьисем çине чунсăррăн пăхакан çынсене тăрă шыв çине кăлармалла, айăплисене хаяррăн ответ тыттармалла.

Вунăкунлăх туса ирттерни эпир çар çыннисен çемьисемшĕн куллен тăрăшассин пуçламĕшĕ кăна пулса тăрать-ха. Закон тăрăх пама тивĕçлĕ пособисемпе льготăсене вăхăтра панипе паманнине, заявленисемпе жалобăсене мĕнле пăхса тухнине, çавăн пекех çар çынни çемьисен членĕсене ĕçе мĕнле вырнаçтарнине куллен тĕрĕслесе тăмалла; çар служащийĕсен рядовой тата начальствующи составĕн çемьисене пурнăçпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас енĕпе тăтăшах ĕçлесе пымалла, вĕсен интересĕсене кирек мĕнле хĕсме хăтланнине те çийĕнчех татăклăн сиресире пăрахмалла.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе организацилес тĕлĕшпе комсомолпа профсоюз организацийĕсем пысăк ĕç тума пултараççĕ тата тума тивĕçлĕ те. Çак ĕçе мĕнпур общественноçа явăçтармалла. Фронтовиксен çемьисемшĕн куллен тăрăшнипе эпир фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлататпăр, ылханлă нимĕç оккупанчĕсене пуçĕпех çапса аркатассине хăвăртлататпăр.

Т. АХАЗОВ,
ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—28, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 679 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 н.